[illegible]мĕш çул тухать; Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
25
ЭРНЕКУН
297(6232) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Мускав, Кремль, СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Киргиз республикинчи Куршабски районри малта пыракан, Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсен чĕн тата хамăн Сире Çурални Кун ячĕпе пĕтĕм чĕререн саламлатăп. Сире пур ĕçсыннисен савăнăçĕшĕн нумай çул пурăнма сунатăп.

Манăн çемьерен 8 боец отечественнăй вăрçăн тĕрлĕ фрончĕсенче пирĕн тăван çĕршыва çынçиен Гитлертан хÿтĕлеççĕ. Эпĕ хам Сирĕн юбилей тĕлне танксен колоннине тума 125 пин тенкĕ хыврăм. Çав танка Сталин ятне пама килĕшĕр. Манăн перекетлесе хăварнă укçапа тунă çав танк танксен «Колхозник Киргизстана» ятлă колоннин пуçĕнче тăрса ăна ертсе пыраканни пултăр. Эсир, Сталин юлташ, вăл танкăн экипажне чи лайăх боецсенчен-киргизсенчен пухма хушăр. Вĕсем пирĕн тăван çĕршывшăн, колхоз стройĕшĕн киргизсене телейлĕ пурнăç панăскершĕн çирĕп тăччăр.

Ленин ячĕпе тăракан артелĕн колхозникĕ
ОРАЗ КУЛЬМАТОВ.

Мускав, Кремль, СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Манăн пĕртен-пĕр шукăш—кураймантăшмана аркатса тăкма хамăрăн Хĕрлĕ Çара пулăшасси. Саратов облаçĕнчи колхозникĕн—Головатый юлташăн ырă пуçарăвне йышăнса, эпĕ Государство банкне танксен «Колхозник Грузии» ятлă колоннине тума колхозра чыслăн ĕçлесе тупса перекетлесе хăварнă хамăн пĕтĕм укçана — 257 пин тенкĕ хыврăм.

Грузири колхозниксен тамăкĕсем нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсене, пирĕн совет çĕршывне вараланкаскерсене, пĕр шеллемесĕр таптаса, пĕтерсе пычăр.

Эсир, пирĕн юратнă çулпуç тата атте, нумай çул хушши пурăнăр!

Грузи ССР-ĕнчи Горийски районри Сванети ялĕнчи «Цетели Ва рсквали» колхозăн председателĕ
СТЕПАН ИВАНОВИЧ БАГДОШВИЛИ.

Выранти тата кооперативлă промышленность ĕçне тĕпренех вăйлатмалла

Вăрçа пула пирĕн шултăра промышленность пĕтĕмпех çĕршыв оборонишĕн ĕçлет, фронта кирлĕ продукци туса кăларать. Çавăнпа та ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларас тĕлĕшпе ытларах выранти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçлеме тивет.

Анчах пирĕн республикăн выранти промышленноçĕпе промысла кооперацийĕ çак задачăна пурнăçа кĕртсе пыраймаççĕ. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ, пирĕн выранти промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсем 1942 çулта начар ĕçлерĕç, тесе палăртса хăварчĕ. Выранти промышленность çулталăкри ĕçсен планне 11 уйăх хушшинче мĕншур продукцие туса кăларас енĕпе 86,1 процент, вăл шутран куллен кирлĕ таварсене туса кăларас енĕпе 53 процент çеç тултарнă. Промысла кооперацийĕ вара çулталăкри ĕçсен планне мĕншур продукци енĕпе те, çавăн пекех куллен кирлĕ таварсем енĕпе те çурри ытларах çеç тултарнă.

Выранти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперацийĕн артелĕсем начар ĕçлени хăйсен оборудованийĕсемпе туллин усă курманнинчен нумай килет. Канашри Сталин ячĕпе тăракан артелĕн, Улатăртипе Первомайскинчи промкомбинатсен, Кирери вăрман завочĕн чылай оборудованийĕсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Етĕрне, Çĕмĕрле хулисенче, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче тата выранти промышленность предприятийĕсен ĕç пÿлĕмĕсемпе оборудованийĕсене урăх организацисене пани пулнă. Çĕмĕрле, Первомайски, Пăрачкав райсовечĕсен, Улатăр хула совечĕн исполкомĕсем предприятисене плана тултарма пулăшас вырăнне вĕсен ĕç вăйĕпе час-часах урăх çĕрте усă курнă.

Выранти промышленность халăх комиссариачĕн, промысла союзĕсен, предприятисемпе артельсен руководителĕсем ĕçе организацилес, кадрсем хатĕрлес, рабочисен пурнăçпа йăла условисене лайăхлатас тĕлĕшпе те начар ĕçлеççĕ, ĕçсыннисен кулленхи нушисене тивĕçтерессине çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ строительство материалĕсене тăвакан промышленность управленийĕ (начальникĕ Домбицкий юлташ) уйрăмах начар ĕçленине палăртса хăварчĕ. Асăннă управлени çулталăкри ĕçсен планне 29,7 процент кăна тултарнă. Çавăн пекех çулталăкри плана тарпромсоюз (председателĕ Гордеев юлташ) — 29,1 процент, Древпромсоюз (председателĕ Андреев юлташ)—40 процент çеç тултарнă. Хуçалăх çулне вĕçлес тĕлĕшпе Первомайски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Ишлей районĕсенчи, Улатăр тата Канаш хулисенчи предприятисем те начар ĕçлеççĕ.

Районсемпе хула совечĕсен исполком председателĕсем, ВКП(б) райкомĕсемпе горком секретарĕсем выранти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперации артелĕсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пынă. Промкомбинатсемпе артельсем—халăх валли куллен кирлĕ япаласене выранти чĕртавартан туса кăларакан предприятисем пулса тăнине, çав предприятисен ĕçĕпе тăтăшах интересленме кирлине вĕсем манса кайнă. Çавна пула чылай районсемпе хуласенчи партипе совет организацисем промкомбинатсемпе артельсен ĕçри чăрмавĕсене пĕлмеççĕ, вĕсене сиенчех сирес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Артельри рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движение организацилесе ертсе пырас, массăллă ăнлантару ĕçне туса пырас тĕлĕшпе те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ выранти промышленноçпа промысла кооперацийĕн ĕçĕнчи çак ситменлĕхсене халех пĕтерме хушса хăварчĕ тата вĕсен ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе туса ирттермелли мероприятисене палăртрĕ. Пленум выранти промышленноçпа промысла кооперацийĕсене хуçалăх енчен çирĕплетес, ĕçсыннисем валли куллен кирлĕ таварсене туса кăларассине ÿстерес, çавна май чĕртаварпа тата производство вăйĕсемпе туллин усă курас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене 1943 çулти январĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр палăртса хума районсемпе хула совечĕсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсене хушса хăварчĕ. Госпланăн, халăх комиссариачĕсемпе промкооперации союзĕсен промкомбинатсемпе артелсен производство планĕсене тăвассине йĕркелемелле, таварсен пахалăхлă кăтартăвĕсене татăклăн палăртмалла, предприятисене аталанса пыма пулăшмалла.

Асăннă хуçалăх отраслĕсен руководителĕсем ĕçсыннисен пурнăçпа йăла нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртса, пленум вĕсене атă-пушмаксем, кĕпе-тумтирсем тата ытти япаласем юсакан мастерскисен хисепне ÿстерме, вĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма хушса хăварчĕ.

Выранти промышленноçпа промысла кооперации работникĕсен кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлемелле. Кадрсене хатĕрленĕ чух пур майсемпе те—бригадăн вĕрентнипе те, уйрăм мастерсем çумне çирĕплетсе вĕрентнипе те— анлăн усă курмалла. Çак ĕçе партипе совет органĕсен те активлăн хутшăнмалла, артельсен руководителĕсене ку тĕлĕшпе пулăшу парсах тăмалла.

Партипе совет организацисен тата предприятисемпе артельсен руководителĕсем пĕрмаях улшăнса тăнине, унти рабочисене урăх çĕре илессине пĕтермелле; ĕç вăйĕпе, сборудованисемпе туллин усă курмалла. Рабочисемпе служащисен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлес пулать, предприятисемпе артельсем çумĕнче подсобнăй хуçалăхсем тăвас пулать.

Хуçалăх руководителĕсен, партипе совет работникĕсен предприятисемпе артельсенчи рабочисем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла. Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче панă кăтартусемпе кашни рабочипе работницăна паллаштармалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ Шăмăршă, Первомайски, Етĕрне, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи, Улатăрпа Канаш хулисенчи партипе совет организацисем выранти промышленность предприятийĕсемпе промысла кооперации артелĕсен ĕçне çиелтен кăна ертсе пынине хыттăн сивлерĕ. Пленум Выранти промышленность халăх комиссарне Егоров, апат-çимĕç халăх комиссарне Калинкина, выранти строиматериалсене тăвакан промышленность управлени начальникне Дембицкий, промысла кооперацийĕн РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Степанов юлташсене тата промсоюзсен председателĕсене предприятисемпе артельсене ертсе пырас ĕçĕн стильне тĕпренех улăштарма, вĕсене тăтăшах практикăлла пулăшу пама; ĕç дисциплинине çирĕплетме, кадрсене йышлăраххăн хатĕрлеме, чĕртаварсемпе материалсене пĕр чăрмавсăр парса тăма хушса хăварчĕ.

Вырăс хресченĕн-патриочĕн Ферапонт Головатыйăн пуçарăвне йышăнса илнĕ Васянин, Дубровин, Кашечкин юлташсене чыс та мухтав!

Патриотизмлă хăватлă движени

Темиçе кун каярах çеç çĕршыв Саратов облаçĕнчи Ново-Покровски районри «Стахановец» колхозăн членĕ Ферапонт Петрович Головатый юлташ хăй перекетлесе хăварнă 100.000 тенкĕ укçине Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсене парнелемешкĕн боевой самолет тума хывни çинчен пĕлчĕ.

«Известия» хаçат ун çинчен çапла çырчĕ: «Ферапонт Головатыйăн кăмăлĕнче совет патриочĕн çулăмлă чĕри тапать. Вăл пирĕн çĕр çинче çуралса, пирĕн Тăван çĕршывра ÿссе çитĕннĕскер, совет государствин рядовой хресченĕ, хăйшĕн пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхĕ, Тăван çĕршывăн кун-çулĕ мĕн иккенне пĕтĕм чун-хавалĕпе тăрăнăн туйса тăрать. Ферапонт Головатый пек çынсем çакна лайăх туйса тăраççĕ: пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхĕ вăл — пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăхăн ирĕклĕхĕ, совет государстви чечекленни вăл—пирĕн çĕршывăн кашни труженикĕ чечекленни, пирĕн державăн чапĕ вăл — пирĕн çĕршыври мĕншур çынсен чапĕ, пирĕн çĕрĕн телейĕ вăл — çĕршыври кашни çыннăн телейĕ пулса тăрать», терĕ.

Ферапонт Головатыйăн мухтавлă пуçарăвĕ çĕршывăн мĕншур кĕтессисенче — хĕвеллĕ Грузипе Киргиз ССР-ĕнче, Омск облаçĕпе, Казах ССР-ĕнче, Мускав облаçĕнче,—пур çĕрте те питех те хăвăрт сарăлчĕ.

Чăваш республикинчи колхозниксем те Ферапонт Головатый колхозникĕн пухăш-кăмăлĕсемпех пурăнаççĕ. Вĕсем те хăйсем перекетлесе усранă укçи-тенкине Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарнă çĕре, тăшмана çĕнтерес ĕç валли ырă кăмăлпа параççĕ. Головатый юлташăн пуçарăвне пирĕн республикăри чи малтан Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Васянин юлташ йышăнса илчĕ, вăл танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 100.000 тенкĕ хыврĕ. Паянхи номерте эпир Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхозăн председателĕ Дубровин юлташ хăйĕн ывăлĕ летчик Михаил валли боевой самолет тума 100.000 тенкĕ; çав районри «Трактор» колхозăн председателĕ Кашечкин юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 50.000 тенкĕ укçа хывни çинчен пичетлетпĕр.

Вырăс хресченĕн-патриочĕн Ферапонт Головатыйăн пуçарăвне хăвăрт йышăнса илнĕ Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене Васянин, Дубровин, Кашечкин юлташсене чыс та мухтав!

Ферапонт Головатыйăн пуçарăвĕпе

ПĂРАЧКАВ, декабрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Тăван çĕршыври колхозник-патриотсем пуçарнă пархатарлă примера йышăнса илсе, «Красный пахарь» колхозăн председателĕ Степан Михайлович Дубровин юлташ нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçакан хăйĕн ывăлĕ Михаил Степанович Дубровин летчик валли личнăй самолет тума 100.000 тенкĕ укçа хыврĕ. Çавăн пекех мухтавлă патриотăн Ферапонт Головатыйăн пуçарăвне йышăнса илсе, «Трактор» колхозăн председателĕ Николай Степанович Кашечкин юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума хăйĕн перекетлесе хăварнă 50.000 тенкĕ укçине банка хыврĕ.

Совет патриочĕсем пуçарнă пархатарлă движени районра анлăн сарăлса пырать. «Парижская коммуна» колхозăн председателĕ С. Пиняев юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 20.000 тенкĕ, «Восход» колхозăн председателĕ Ф. Тихонов юлташ 15.000 тенкĕ панчĕç. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума паянхи кун тĕлне районри колхозсемпе колхозниксем пурĕ 1.500.000 тенкĕ пухрĕç. Вăл шутран пĕр миллион тенкине юлашки ик-виçĕ кун хушшинче пухнă. Пăрачкав ялсоветĕнчи колхозсемпе колхозниксем çак ĕç валли 320.000 тенкĕ, Никулино ялсоветĕнчи колхозсемпе колхозниксем — 200.000 тенкĕ хывнă.

М. БЕЛОГЛАЗОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

1.900.000 тенкĕ пухнă

ВĂРНАР, декабрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсемпе колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума паянхи кун тĕлне пурĕ 1.900.000 тенке яхăн укçа пухса банка хывнă. Малта — Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз. Çак ĕç валли унтан пурĕ 400.000 тенкĕ пухнă. Кунсăр пуçне колхоз председателĕ Антонин Дмитриевич Васянин юлташ 100.000 тенкĕ хывнă. Çавăн пекех Уравăшри «Первое Мая» колхоз членĕсем те танксен колоннине тума 120.000 тенкĕ укçа пухрĕç.

С. КОРОТКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Танксен „Медработник Чувашии" колоннине тăвар!

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăçалхи декабрĕн 13-мĕшĕнче медицина работникĕсен ĕçуксине ÿстерессипе çинчен йышăннă постановление Чăваш республикинчи медицина работникĕсем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Çак хыпара илсен, Шупашкар хулинчи медработниксен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

— Партипе правительство медицина работникĕсемшĕн куллен тăрăшаççĕ. Çак питех те йывăр кунсенче, оборона нушисем валли укçа-тенкĕ тем пекех нумай кирлĕ пулин те, пирĕн, медицина работникĕсен ĕçуксине ÿстерессипе çинчен йышăннă постановлени çавна уççăнах кăтартса парать. Çак постановление хавхаланса, эпир, медработниксем, малашне татах та тăрăшарах ĕçлĕпĕр, çĕршывăн санитари оборонине тĕрекллетессишĕн пĕтĕм вăя, ĕçри пултарулăха хурса кĕрешĕпĕр, фронта пулăшассине вăйлатăпăр. Колхозниксемпе работниксем хăйсен перекетленĕ укçи-тенкине Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарма танксен колоннисене тума параççĕ. Медицина работникĕсем те ирсĕр тăшмана аркатса тăкас ĕçшĕн нимпе те шеллемесçĕ. Эпĕ танксен «Медработник Чувашии» колоннине тума укçа пухма сĕнетĕп, çак ĕç валли 1.000 тенкĕ хыватăп, — терĕ каналпура медицина наукисен кандидачĕ доктор П. Н. Осипов юлташ.

Унăн сĕнĕвне Шупашкар хулинчи медработниксен активĕ пĕр кăмăлпа ырларĕ, республикăра танксен «Медработник Чувашии» колоннине тума укçа пухма йышăнчĕ.

Юлашки ик-виçĕ кун хушшинче Шупашкарти медработниксем çак ĕç валли пурĕ 117.000 тенкĕ укçа пухса пама çырăннă. Врачсем Марков юлташ 690 тенкĕ, Николаева юлташ — 500 тенкĕ панчĕç. Шупашкарти поликлиника коллективĕ танксен «Медработник Чувашии» колоннине тума 20.688 тенкĕ пухма пулчĕ. Çавăн пекех Аптекоуправлени коллективĕ çак ĕç валли 5.800 тенкĕ пухма пулчĕ. Ватă провизор Капитонов юлташ (унăн икĕ ывăлĕ фронтра) танксен «Медработник Чувашии» колоннине тума 500 тенкĕ пама пулса, çапла каларĕ:

— Ирсĕр тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕç валли эпĕ нимĕн те шеллеместĕп. Партипе правительство мана инвалид шутĕпе пенси парса тăратчĕç. Вăрçăн йывăр кунĕсенче эпĕ ĕçлеме сĕр пурăнма пултараймастăп. Çавăнпа валлех ĕçлеме пуçларăм. Хамăн ĕçре пĕтĕм вăя хунисĕр пуçне эпĕ фронта хамăн перекетлесе хăварнă укçа-тенкĕпе пулăшатăп.

Танксен «Медработник Чувашии» колоннине тума Венерически диспансер коллективĕ те 4.000 тенкĕ пухма пулчĕ. Диспансерăн главнăй врачĕ Лоцман юлташ çак ĕç валли хăй 1.000 тенкĕ парать.

Шупашкар хулинчи медицина работникĕсен активĕн пуçарăвне районсенчи медицина работникĕсем ырласа йышăнаççĕ. Йĕпреç Октябрьски районĕн çак ĕç валли 4.800 тенкĕ укçа пухни çинчен пĕлтерчĕç. «Медработник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçе Улатăр хулипе Шăхасан районĕнче те пуçăннă.

Республикăри медицина работникĕсем! Шупашкар хулинчи медицина работникĕсен активĕн пуçарăвне анлăн сарар, танксен «Медработник Чувашии» колоннине тунă çĕре хутшăнар!

Л. ГРАЧЕВА,
Медсантруд работникĕсен союзĕн Обкомĕн председателĕ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I. Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем малалла наступлени тăваççĕ

Декабрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра малтанхи енчеллех ăнăçлă наступлени туса пырса, 20—25 километр малалла кайнă. Сакăр кун хушши наступлени туса, пирĕн войскăсем пĕтĕмпе 135—190 километр малалла куçнă.

Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта, вăл шутрах халăх пурăнакан пысăк пунктсене — МИХАЙЛОВО-АЛЕКСАНДРОВСКИЙ, КОЛОДЕЗИ, МАНЬКОВО-БЕРЕЗОВО, СЕЛИВАНОВКА ятлă пунктсене, СКОСЫРСКАЯ, МИЛЮТИНСКАЯ ятлă район центрĕсене тата ЧАЙКИН, ШЕПТУХОВКА ятлă пысăк чугунçул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 24-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 5.600 çын чухлĕ ÿснĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕпе 24-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе противникăн 42.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Декабрĕн 23-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче противникăн 6.000 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

II. Пирĕн войскăсем Çурçĕр Кавказра наступлени туса пыраççĕ

Çак кунсенче пирĕн войскăсем НАЛЬЧИКРАН кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра наступление куçнă, противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе 18—20 километр малалла кайнă. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан пысăк пунктсене — ДЗУРИКАУ, КАДГОРОН, АРДОН, АЛАГИР, НОГКАУ ятлă пунктсене йышăнса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă, вĕсем халăх пурăнакан вуншар пункта, çав шутра **Кабычино, Баранниковка, Новоселовка, Ольховый Рог, Большинская, Сулинский** ятлă пысăк пунктсене тата **Волошино, Первомайское** ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçнă, противника 24 дзотран тата темиçе çуртран хĕссе кăларнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕр рота ытла пĕтерсе тăкнă, пĕр оруди, 3 миномет, 21 пулемет тата 50 винтовка тытса илнĕ. Хулан кăнтăр хĕрринче тăшманăн пĕр çĕре пухăннă пехотине минометсемпе персе сапаласа янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕрекллетнĕ тата разведка тунă. Пĕр участокра пирĕн разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсен 5 окопне йышăнса илсе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ. Пирĕн авиаци аэродромра противникăн 7 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Нимĕçсем танксемпе пехотăн çĕнĕ вăйĕсене илеиле пырса çапăçăва кĕртсе яраççĕ, анчах та вĕсем совет боецĕсем хирĕç тăнине персе хуçма пултараймаççĕ. Йăлтах урăхла, кун каçа пирĕннисем противника халăх пурăнакан икĕ пунктран хĕссе кăларнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ. Н-ски часть нимĕçсен 5 танкне тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 48 автомашинине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, тĕрлĕ калибрлă 23 орудине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн пехотинецсемпе бронебойщиксем тата гвардеец-минометчиксем пĕрле кĕрешсе нимĕçсен 18 танкне персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем, нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ фашистла войскисене хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр районра пирĕн чаçсем противникăн маларах çавăрса илнĕ группировкине пĕтĕмпех аркатса тăкнă, нумай çынна тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пысăк пункта йышăнса илнĕ, çав пунктшăн пынă çапăçура вĕсем 800 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр участока нимĕçсем васкаса резервсем илсе пынă та пирĕн малалла тапăнса пыракан чаçсене тытса чарма хăтланнă. Совет боецĕсем противникăн пехотине сирсе янă, тăшман дивизийĕн штабне аркатса тăкнă тата боеприпассен, хĕçпăшалсен, тĕрлĕ çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем çапăçса разведка тунă тата противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсем çине тапăнса пынă. Кун каçа нимĕçсен 21 дзотне, 26 блиндажне тата 2 наблюдательнăй пунктне ишĕлтернĕ. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн контратакисене сирсе янă. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿссе хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем юлашки кунсенче противникăн пĕр группировкипе çапăçнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсене тусем хушшине хĕстерсе лартнă та пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Туллимар данныйĕсем тăрăх, тăшманăн группировкине пĕтерсе хунă чухне нимĕçсен 3.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 76 пулемет, 18 миномет, 6 оруди, 92 автомат, 1.000 винтовка ытла, 3 гранатомет, 3 противотанковăй пăшал, 8 радиостанци 250 пин винтовка патронĕ тата гранатăсем, минăсем, снарядсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн йышлăрах вăйĕпе 2 кун хушши çапăçса 144 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă, темиçе кун иртсен нимĕçсем партизансене çавăрса илсе пĕтерсе хума хăтланнă. 5 сехет хушши пынă вăйлă çапăçура совет патриочĕсем тăшманăн 167 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата трофейăсем нумай тытса илнĕ. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ 65 гитлеровеца вĕлернĕ. Кунсăр пуçне, партизансем чугунçула 816 метр тăршшĕнче сирпĕнтерсе ярса пăсса хунă тата телеграфпа телефон кабельне 150 метр тăршшĕ касса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Снорки тата Головицы ялĕсенчи мирлĕ пурăнакан халăха тискеррĕн асаплантарнă. Снорки ялĕнче нимĕçсем 16 çурта, вĕсенче пурăннă çынсемпе пĕрлех çунтарса янă. 70 çын чĕрĕнех çунса кайнă. Фашистла ирсĕрсем 17 çулхи колхозницăна Александра Гвардейцевăна тытса пусмăрланă. Ирсĕррĕн мăшкăлланă хыççăн нимĕçсем унăн кăкăрĕсене касса ывăтнă та хăйне персе вĕлернĕ. Головицы ялĕнче нимĕç бандичĕсем Мария Заболоцкая колхозницăна пĕр çултан пуçласа 6 çула çитнĕ виçĕ ачипе пĕрле персе пăрахнă. Пĕр çулхи ачине амăшĕн аллинчех персе вĕлернĕ. Денисенковăн пĕтĕм çемьине персе вĕлернĕ, унăн çемьинче çитĕнне 5 çын тата икĕ çулхи ача пулнă. Çав ялсенче гитлеровецсем пĕр айăпсăр ачасемпе хĕрарăмсене тата стариксене 160 çынна персе, асаплантарса тата çунтарса вĕлернĕ. Франци патриочĕсем, ирĕклĕ стрелоксен отрячĕсене пĕрлешнĕскерсем, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Трапан районĕнче тата Лабасс—Ветюн участокĕнче ирĕклĕ стрелоксем нимĕç эшелонĕсене крушени тунă. Гаврти вокзалра патриотсем пĕр нимĕç офицерне вĕлернĕ, икĕ офицера амантнă. Çак кунсенче Парижра такамсем нимĕçсен сывлăш-çар чаçĕсенче тăракан офицерсем валли уйăрса хунă гостиницăна бомба пăрахнă. Темиçе вуншар гитлеровец вилнĕ.

Декабрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче, **Центральнăй** фронтра тата **Донăн** вăтаçĕрĕнчи районра малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем гитлеровецсен икĕ контратакине сирсе янă, гитлеровецсем хăйсен иртнĕ кун çухатнă позицийĕсене каялла тытса илесшĕн пулнă. Çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 300 виллине пăрахса хăварса, противник малтанхи позицисем патне чакнă. Пирĕн боецсем 20 пулемет, 170 винтовка тата 10.000 патрон ытла тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата разведка тунă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем противник çине

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

персе тăнă тата разведка тунă. Н-ски чаçăн артиллеристĕсем 5 дзота ишĕлтернĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă тата нимĕç пехотин пĕр ротине салатса янă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Сталинградран кĕнтĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн мотопехотипе танкĕсен атакисене сирсе янă. Вăйлăн çапăçнă хыççăн гитлеровецсене халăх пурăнакан тата тепĕр пунктран хĕссе кăларнă. Нимĕçсен 1.000 ытла салтакĕпе офицерне, 15 танкне, 63 автомашинине, 12 орудине, 18 пулеметне тата 4 самолетне пĕтерсе тăкнă. Старши лейтенант Комаров ертсе пыракан артиллери батарейи нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан тата темиçе пункта тытса илнĕ. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски соединенийĕ каялла чакакан противника хăваласа пырса, нимĕçсен пĕр дивизин чаçĕсене арккатса тăкнă. Çав дивизин командирне тата 1.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем контратака тума хăтланнă. Совет боецĕсем противника сирсе янă та каялла чакакан гитлеровецсем хыççăнах пырса, халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли ытла выртса юлнĕ. Пирĕннисем трофейсем нумай тытса илнĕ тата нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене тĕреклетнĕ тата противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсем çине тапăнса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн 14 дзочĕпе блиндажне йышăнса илнĕ тата нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла вăлернĕ, 4 оруди, 9 пулемет тата 2 миномет тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшман пехотин батальонĕ танксем пулăшса пынипе пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕннисем артиллерирен персен, гитлеровецсем хăйсен малтанхи рубежĕсем патне чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен çунса кайнă 3 танкĕ тата салтакĕсемпе офицерĕсен 160 вилли выртса юлнă.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки икĕ уйăх хушшинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсен 17 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисем вăхăтĕнче 18 паровоз, войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 220 вагон тата горючи тултарнă 7 цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Нимĕçсен 3.000 çити салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

* * *

Аялараха нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Сталинград облаçĕнчи Жирки хуторĕнче ирсĕр ĕçсем тунин çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Сталинград облаçĕнчи Жирки хуторне пирĕн войскăсем ирĕке кăларнă кун эпир çĕре çурри чавса лартса чулсемпе витсе хунă красноармеецпа-минометчика Дмитрий Лыжанина тупрăмăр. Курнă çынсем каланă тăрăх, çакна пĕлнĕ: гитлерла палачсем тискеррĕн асаплантарнă хыççăн Лыжанина шăтăка пăрахнă та хăйăрпа витсе хунă. Çавăнта Лыжанин икĕ кун хушши выртнă. Эпир ăна чавса кăларнă чухне вăл вилес патнех çитнĕччĕ. Халĕ Лыжанин юлташ госпитальре сывалса выртать. Нимĕçсемпе румынсен ирсĕрĕсем «Основа» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсене А. Курасова, Короткова тата Смирнова вĕсем аманнă красноармеецсене пулăшма хăтланнăшăн персе вĕлернĕ». Актă старши батальоннăй комиссар Шмельков, старши лейтенант Бондарев, лейтенант Поппов; красноармеец Маврычев, медсестра Белинская тата колхозница Бунеева алă пуснă.

Ытлашши тырра—Хĕрлĕ Çар фондне

КАЛИНИНО, декабрĕн 24-мĕшĕ. (Хамăр корр.; телефонпа). Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен пуçарăвĕ çинчен сÿтсе-явнă хыççăн Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен хуçалăхĕнче перекетленĕ тата ĕçкунĕсем тăрăх илнĕ ытлашши тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывма кăмăл турĕç. Вĕсем пĕр кун хушшинче 200 пăт пухрĕç. Колхозниксем И. Николаев юлташ 6 пăт, А. Шатровпа Я. Николаев юлташсем 3-шер пăт пачĕç.

Кунсăр пуçне, колхоз оборона фондне 122 центнер тырă хывнă.

С. ШАДИН.

* * *

СĔНТĔР. (Телефонпа). Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен примерĕпе Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ. Капмаш ялсоветĕнчи «Свобода» колхозăн членĕсем 450 пăт тырă панă. Колхоз председателĕ Петровский, колхоз счетоводĕ Семенова—12-шер пăт, ялсовет председателĕ Тихонов, комсомол организацин секретарĕ Семенова, колхозник Сапожников—6-шар пăт панă.

Урпаш ялсоветĕнчи «Искра» колхоз 75 пăт панă, колхоз председателĕ Родионов—20 пăт, сĕт-çу фермин заведующийĕ Аброшкина — 12 пăт, колхоз счетоводĕ Ерофеев—10 пăт панă.

М. ИСАЕВ.

* * *

ТĂВАЙ. (Телефонпа). «Искра Ильича» колхозра шуху пулса иртрĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 80 пăт тырă хывма çырăнчĕç. И. Бонифатьев, М. Кузьмин, А. Адамов, М. Яковлев пĕрер центнер пама çырăнчĕç. Ку ĕç малалла сарăлса пырать.

В. ИЛЬИН.

Всевобуч пункчĕсенче

Пулас пулеметчиксем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Нумаях пулмасть комбинатра пулеметчиксем хатĕрлекен подразделенирен 100 çамрăк ытла вĕренсе тухрĕç. Тĕрĕслÿре вĕсем пурте тенĕ пекех çирĕп дисциплинăллă пулни тата программăри материалсене лайăх пĕлни палăрчĕ. Вĕренсе тухнисенчен 70 процентне яхăн «отлично» тата «хорошо» паллăсем илчĕç.

Вĕренÿре уйрăмах Г. Суворов командир пулса ертсе пыракан взвод пысăк результатсем кăтартрĕ. Унта çурри ытла отличниксем. Сăмахран, производствăри стахановецсем М. Лещаков, Б. Илларионов, М. Федоров, А. Федоров, А. Подклетнов юлташсем пур дисциплинăсемпе те «отлично» паллăсем илчĕç.

Жевлюк юлташ командир пулса ертсе пынă подразделенире те отличниксем сахал мар.

— Эпир паян тесен паян фронта кайса, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçăва кĕме хатĕр. Тăшмана хирĕç пурнăçа шеллемесĕр çапăçма пулатпăр, — теççĕ çамрăк пулеметчиксем.

Çак кунсенче райвоенкомат çумĕнче тата тепĕр подразделени вĕренĕве тытăнчĕ. Унта пĕтĕмпех хĕрсем çÿреççĕ.

Йĕлтĕр спорчĕн инструкторĕсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Осоавиахим райсоветĕ нумаях пулмасть 20 çынна йĕлтĕр спорчĕн общественăллă инструкторĕсем пулма вĕрентсе кăларчĕ. Халĕ вĕсем халăха йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентес ĕçе организацилеме ялсене саланчĕç.

В. ТРОФИМОВ.

Пур çĕрте те перекетлеме пулать

«Труженик» заводра ку таранччен станоксемпе, инструментсемпе туллин усă курман, уйрăм агрегатсем сменисемпе ахаль ларнă. Çавăн пекех материалсене те перекетлеме тăрăшман, уйрăмах производствăран юлакан япаласене сая янă.

Юлашки вăхăтра эпир производствăри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене туса ирттертĕмĕр. Çунтармалли вутта перекетлес тесе пăс хуранне тасатса йĕркеленĕ тата пăс каякан трубасене урăхлатса çĕнетнĕ. Çак мероприятисем завода куллен темиçе кубометр вутă перекетлеме май параççĕ. Çапла, сăмахран, пĕр вăхăт хушши пăс пама ĕлĕкрех 10 кубометр вутă çунтарнă пулсан, халĕ 8,5 кубометр çеç пĕтеретпĕр. Çакăнтах тата «Ламс» хуран ĕлĕкрех локомобиле çеç ĕçлеттернĕ пулсан, юлашки вăхăтра вара çав хуранах фанернăй тата механически цехсене çитерĕклĕ таран ăшă парса тăма пуçларĕ.

Чĕртавара перекетлес тĕлĕшпе те хăшпĕр улшăнусем пур. Ĕлĕкрех детальсем валли 25 миллиметр хулăмĕш хăма çурса кăларнă, халĕ эпир 23 миллиметр хăвартăмăр. Кунсăр пуçне тата специальнăй продукци туса кăларнă хыççăн юлакан япаласемпе туллин усă курма пуçларăмăр. Вăл отходсемпе столярнăй цех сĕтел-пукансем, тумбочкăсем, этажеркăсем, ещĕксем, хуçалăхра куллен кирлĕ ытти таварсем тунă çĕрте усă курать.

Электроэнергие перекетлес ĕçе те куллен туса пымалла. Ку енĕпе эпир цехсенче ахаль çунса ларакан точкăсене пĕтертĕмĕр, пысăк вăйлă лампăсене пĕчĕкреххисемпе улăштартăмăр.

Анчах тунă ĕçсене çителĕклĕ темеçук-ха. Заводра хĕсĕк вырăнсем пур. Чĕртавара типтерсĕр тыткаланă тĕслĕхсем пулкалаççĕ. Малашнехи ĕçре эпир вăл çитменлĕхсене те пĕтерсе пырăпăр.

М. ШУСТОВ,
Çĕмĕрлери «Труженик» завод техноручĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Малта пырак н юлташсем парти ретне кĕреççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кунĕсенче районра малта пыракан çынсем Ленин—Сталин партийĕн ретне кĕреççĕ. Янчеллĕ ялсоветĕнчи пуçламăш парторганизаци колхоз производствинче лайăх ĕçлекенсене чылайĕшне парти ретне илчĕ.

Парти ретне çак кунсенче Александр Иванов фронтовика илнĕ. Иванов юлташ отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче тăван çĕршывшăн, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене хирĕç хăйне шеллемесĕр кĕрешнĕ. Аманнă хыççăн халĕ вăл вăхăтлăха отпуска таврăннă. Иванов юлташ — колхозри чи лайăх агитатор. Вăл колхозниксене пирĕн воинсен паттăр ĕçĕсем çинчен тĕрĕс те ĕненмелле каласа парать, вĕсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума мобилизацилет.

Савăн пекех Ф. Семенов юлташа та ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Семенов юлташ темиçе çул хушши «Новая сила» колхозра бригадир пулса ĕçленĕ. Унăн бригади яланах малта пынă. Семенов юлташ халĕ колхоз председателĕнче ĕçлет. Вăл ертсе пыракан колхоз фронта пулăшас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлет, государство умĕнчи парăмсене пурне те татнă. Унти колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 30.000 тенкĕ ытла хывнă.

Парти ретне çак кунсенче М. Димитриев юлташпа Н. Филиппова колхозницăна илнĕ. Вĕсем халăх хушшинче авторитетлă, ĕçре ыттисене пример кăтартаççĕ.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

Пултарулла коммунисткăсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Чăвашторг отделенинчи пуçламăш парторганизаци юлашки çур çул хушшинче ВКП(б) кандидатне 3 çынна илнĕ. Пурте вĕсем хĕрарăмсем, кашнийĕ хăйĕн участокĕнче ĕçе лайăх туса пырать.

Тĕслĕхрен, М. Маненкова юлташа илер. Вăл кадрсен пайĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Уйăх каялла ăна урăх вырăна — виççĕмĕш номерлĕ столовăйăн заведующийĕ пулса ĕçлеме куçарчĕç. Çамрăк коммунистка ку ĕçре те хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Халĕ столовăйра улшăну пулни палăрать. Апатланмалли пÿлĕм яланах таса, буфет патĕнче те, апат илнĕ çĕрте те черет çук, кунпа пĕрлех апат пахалăхĕ те лайăхланни сисĕнет. Столовăй апатланма çÿрекенсен сĕнĕвĕсене шута илсе пурнăça кĕртме тăрăшать.

Çак столовăйрах çамрăк коммунистка П. Лохова юлташ повар пулса ĕçлет. Вăл парти кандидатне темиçе уйăх каярах çеç кĕнĕ. Лохова юлташ хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать, ку таранччен ун çинчен пĕр жалоба та пулман, вăл клиентсем хушшинче авторитетлă.

Г. Моисеева юлташа нумаях пулмасть экспедиторран отделени кассирне куçарчĕç. Вăл та парти кандидатне нумай пулмасть кĕнĕ.

Çамрăк коммунисткăсем производствăра пример кăтартса ĕçленипе пĕрлех парти порученийĕсене те йĕркеллĕн пурнăçласа пыраççĕ. Пуçламăш парторганизаци вĕсене агитаторсемпе беседчиксем пулса ĕçлеме уйăрнă. Моисеева юлташ конюхсемпе возчиксем хушшинче агитаци ĕçне туса пырать. Вăл юлашки уйăхсенче кăна темиçе калаçу туса ирттернĕ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çинчен тунă доклада Моисеева юлташ чăн малтан рабочисене вуласа панă, унтан Сталин юлташ каларса тăратнă задачăсене мĕнле пурнăçласа пымалли çинчен калаçу ирттернĕ.

Маненкова юлташ, агитатор пулса ĕçлениспĕр пуçне, ВЛКСМ пуçламăш организацин секретарĕ пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан организацие кăçал 4 çамрăк хутшăннă. Комсомолецсем ĕçре малта пыраççĕ, фронта вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Вĕсем «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 2.200 тенкĕ, «Пионер Чувашии» ятлă танка тума 1.500 тенкĕ пухса панă, фронтовиксем патне 15 парне янă, ăшă тумтирсем сахал мар пухнă т. ыт. те.

Чăвашторг отделенинчи парторганизаци (секретарĕ Конусов юлташ) юлашки вăхăтра çамрăк коммунистсем хушшинче ĕçлессине лайăхлатрĕ. Конусов юлташ вĕсемпе уйрăм калаçусем туса ирттерет, вĕсем поручениесене пурнăçа кĕртнине контрольлесе тăрать, кулленхи ĕçре пулăшса пырать.

Х. ЛИСИН.

Çĕвĕ çĕлекен мастерскойра

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Шупашкарти уйрăм çынсем валли кĕпе-тумтирсем çĕлекен мастерскоя лайăх ĕçлет тесе палăртрĕ. Мастерской иртнĕ уйăхри ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 102 процента яхăн, васкавлă заказсем енĕпе 106 процент тултарчĕ. Иртнĕ уйăхри ÿсĕмсемпе хавхаланса, мастерской коллективĕ ку уйăхра та лайăх ĕçлет. Уйăхри ĕçĕн планне 20 кун хушшинчех 81 процент тултарнă.

Сталин юлташăн докладĕнче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе тата Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, мастерскойри рабочисемпе работницăсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Çĕвĕçсем пурте пекех хăйсен нормисене ирттерсе тултараççĕ. Стахановка-коммунистка Львова юлташ ноябрьти нормăна 240 процент, Смушкевич юлташ 204 процент тултарнă. Русакова мастер ертсе пыракан бригадăри Усова; Николаева тата Игнатьева çĕвĕçсем те нормăран 2 хут ирттерсе ĕçлеççĕ. Бригада хăй кашни кун норма çурра яхăн тултарать.

Белякова мастер ертсе пыракан бригадăн ĕç тухăçлăхĕ вара унтан та пысăкрах: вăл кунсерен икĕ нормăна яхăн тултарать. Бригадăри опытлă çĕвĕçсем Иванушкинăпа Сергеева юлташсем пуринчен те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Вĕсем çĕленĕ кĕпе-тумтирсен пахалăхĕ те лайăх.

Мастерской коллективĕ материалсене перекетлессишĕн те кĕрешет. Ноябрь уйăхĕнче 450 метр материал перекетлесе хăварнă.

Ĕççынисен пурнăçпа йăлари ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе, мастерской кĕпе-тумтир юсакан тата уйрăм заказсем йышăнакан филиал уçать. Филиал çĕнĕ çултан ĕçлеме пуçлать.

Т. ИВАНОВ.

Ăмăрту результачĕсем

ЙЕПРЕÇ. Леспромхоз коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва июнь уйăхĕнче хутшăнчĕ. Ун хыççăн пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç.

Ăмăрту — пысăк вăй. Ăна тивĕçлипе организацилесе ертсе пырсан, вăл лайăх результатсем парать. Леспромхоз коллективĕ 1942 çулхи вăрман ĕççĕсен пĕтĕмĕшлĕ планне хатĕрлес енĕпе 157 процент, турттарас енĕпе 125,7 процент тултарчĕ. Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли заданине те эпир срокчен пĕр уйăх малтан вĕçлерĕмĕр. Заданирен ирттерсе 1943 çулхи пĕрремĕш кварталшăн 7 пин кубометр ытла хатĕрлерĕмĕр, 4 пин кубометра яхăн турттартăмăр.

Хĕрÿ ăмăртура стахановецсен речĕ ÿсех пычĕ. Халĕхи вăхăтра вĕсем 266 çынна çитрĕç. Вĕсенчен 161-шĕ вăрман касакансем, 105-шĕ турттаракансем. Чылай стахановецсем хăйсен заданийĕсене срокчен тултарчĕç. Стахановец В. Чураков юлташ заданирен ирттерсе 365 кубометр, Л. Барилло—170 кубометр, П. Гордеева 10? кубометр вутă хатĕрлерĕç.

Вăрманта ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхне хăпартма вĕсен хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне туса пыни чылай пулăшрĕ. Агитаторсемпе вулавçăсем рабочисемпе ку таранччен 61 калаçу туса ирттернĕ, 69 номер стена хаçачĕ кăларнă. Кусемсĕр пуçне, кашни кунах политинформаци ирттернĕ. Стахановецсен кулленхи ĕçĕн тухăçлăхне кăтарту хăми çине çырса пынă, вĕсене пухса час-часах канашлусем ирттернĕ, малта пыракансен ĕç опычĕне ыттисене паллаштарнă. Ăмăртăва çапла организацилениппе пула вăрманта ĕçлекенсем хăйсен нормисене уйăхсерен ирттерсе тултарчĕç. Октябрь уйăхĕнче, сăмахран, нормăна хатĕрлекенсем 2 процент, турттаракансем 16 процент ирттерсе тултарчĕç.

Анчах пирĕн леспромхоз ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Халĕхи вăхăтра пирĕн автотранспортпа обоз начар ĕçлеççĕ, экспракт промышленноçĕ валли вутă хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пырать. Çак çитменлĕхсене пирĕн çитес вăхăтрах пĕтерес пулать.

Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе тата Хĕрлĕ Çарăн фронтри наступленилĕ çапăçăвĕсем çине ответлесе, вăрман касакансемпе турттаракансем пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрман ĕççĕсен хĕллехи планне ăнăçлăн тултарассишĕн Вăрнар леспромхозĕн коллективне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Çак ăмăртура мала тухасси тата илнĕ обязательствăсене пĕтĕмĕшпех тултарасси — пирĕн задача.

Н. БЕЛЬСКИЙ.
ВКП(б) Обкомĕн леспромхозри парторгĕ.

ÇИТЕС ÇУЛХИ ВĂЙЛĂ ТЫРПУЛШĂН КĔРЕШЕР!

Çуракине халех хатĕрленме тытăнмалла

Тăвай районĕнчи нумай колхозсем 1942 çулта вăйлă тырпул туса илчĕç, государствăна паха тырăсемпе техникăллă культурăсем нумай пачĕç.

1943 çул колхозсем умне çĕнĕ пысăк задачăсем кăларса тăратать. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç çĕнтерÿллĕ çапăçу туса пыма, гитлерла çынçиенсене вĕлерсе пĕтерсе халăха ирĕклĕ, мирлĕ, çутă та культурăллă пурнăç пама тăван Хĕрлĕ Çара, хамăрăн аслă çĕршыва нумайрах тырпул туса памалла, 1943 çулта тырпулсен тухăçлăхне вăйлăн ÿстермелле.

Халĕ районри малта пыракан колхозсем 1943 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме пуçларĕç. Çуракине тухма хатĕрленесси кунран кун сарăлса пырать. Чи паха тырăсене вăрлăхлăх уйăрса сортлаççĕ, ялхуçалăхĕнчи машинăсемпе инвентарьсене юсаççĕ, çĕре çемçетме вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. «Красная Чувашия» колхозра колхозницăсем агротехника тĕплĕн вĕренме тытăннă.

1943 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçе кашни колхозăн халех тытăнмалла. Анчах, калас пулать, районри хăшпĕр колхозсем 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес ĕçе чăтма çук вăрăма ячĕç. Çакă вăл нумай енчен колхоз руководителĕсем авăн çапас ĕçе кирлĕ пек сргинизацилеменнинчен килет. Вăтаялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн авăн çапмалли тата 100 гектар ытла. Çапла пулсан та кунта лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăсемпе усă курмаççĕ. Вăрман хĕрринчи «Хĕрлĕ Сормово» колхозра авăн çапма 11—12 сехетре çеç тухаççĕ те ĕçрен кăç пуличченех таврăнаççĕ.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсем енчен районри юлса пыракан колхозсене пулăшни кирлĕ. Авăн çапас ĕçе васкаса вĕçлесе, килес çулхи çуракине халех хатĕрленме пуçламалла.

В. ИЛЬИН.

Вăрлăхлăх тырра сортлаççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ. Районри малта пыракан колхозсенче 1943 çулхи çуракине хатĕрленес ĕç пуçланчĕ. Нумай колхозсем вăрлăхлăх тырăсене уйăрса çитернĕ, каль вĕсене тасатса сортлас ĕç анлăн сарăлса пырать. Чучукассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз вăрлăхлăх тырăсене сортлас ĕçе лайăх организациленĕ. Ку ĕçе тума уйрăм колхозниксене уйăрса çирĕплетнĕ. Вĕсем кулленех вăрлăх сортланă çĕрте ĕçлеççĕ. Паянхи куна колхоз 150 центнер тырра тасатса сортларĕ, акмалли кондицие çитерсе кĕлетсене пуçтарса хучĕ. Паникассинчи «Шордан» колхоз та вăрлăхсене сортлас ĕçе лайăх организациленĕ, паянхи куна 129 центнер тырра сортласа уйăрса хунă.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

* * *

ЭЛĔК. Хуравартри «Заветы Ильича» колхозра (председателĕ И. Карпов юлташ) кăçал уборка ĕçĕсем организованно пулса иртрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем фронтри пек ĕçлесе, сентябрь уйăхĕнчех авăн çапса пĕтерчĕç, государствăна тырпул парса татрĕç. Халĕ колхоз тупăшсене валеçме хатĕрленет: ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм çурă тĕштырă валеçме палăртнă. Колхоз производствинче стахановла ĕçлекенсен хăйсем валли çеç мар, сутмалăх та тырă пулать.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленипе пĕрлех колхоз çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Колхозниксем эрне ытла ĕнтĕ вăрлăх сортлаççĕ.

Хитекушкĕнчи «Çĕнĕ çул» колхоз та ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçлерĕ. Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн колхозра ĕç тухăçлăхĕ вăйлăн ÿсрĕ. М. Ильина, И. Никитина, Ф. Павлова колхозницăсем кăçал ĕçрен пĕр кун та юлман, ĕç нормине яланах ирттерсе тултарнă. Вĕсем кăçал кашни 230—260-шар ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Халĕ çуркунне акма вăрлăх сортлаççĕ.

М. КУСТИКОВ.

Стахановецсен канашлăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Çак кунсенче комбинатри стахановецсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура цехсемпе отделсен начальникĕсем те пулчĕç. Унта комбинат директорĕ Мартынов юлташ коллективăн ноябрь уйăхĕнчи ĕçĕсемпе умра тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Докладчик, çавăн пекех тата пренире тухса калаçакансем те, çакна палăртрĕç: рабочисемпе работницăсем, Сталин юлташăн докладĕпе хавхаланса, ĕçре çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем туса пыраççĕ. Халĕхи вăхăтра кашни цехрах двухсотниксемпе трехсотниксем темиçе вуншар çын шутланаççĕ, вĕсен йышĕ куллен ÿссе пырать. Петров, Филимонов, Нестеровский юлташсем ертсе пыракан цехсенче нормăна тултараймин рабочисем çук, кашни рабочипе работница кунта нормăна 120 процентран кая мар тултарать. Вăл цехсем октябрьти планзсене ытлашшипех тултарнă.

Ассăнна цехсен коллективĕсем ноябрьте те начар мар ĕçлеççĕ. Уйрăм бригадăсемпе рабочисем хăйсен заданийĕсене тахçанах тултарчĕç. Сăмахран, Петров юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановецсем Сыромятникова, Герасимова, Большаков, Лещаков, Димитриев т. ыт. вуншар рабочисем ноябрь уйăхĕнчи нормăсене 10—12 кун хушшинчех тултарнă.

Анчах хăшпĕр цехсем производство планĕсене тултарса пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Канашлу уйрăмах Назарова Новохатный юлташсен цехĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Ку цехсенче рабочисене тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман, хăшпĕр чухне простойсем пулаççĕ. Анчах çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе цех начальникĕсем татăклă мерăсем йышăнмаççĕ.

Канашлура ВКП(б) Центральный Комитечĕн комбинатри парторгĕ Мазуренко юлташ тухса каларĕ. Вăл уйрăмах Батаршин юлташ начальник пулса ĕçлекен отдел работникĕсем çаварăнăçусăр ĕçленине критикăларĕ.

Канашлура пулнисем рабочисен ĕç тухăçлăхне ÿстерес, вĕсене стахановецсем пек ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса хăварчĕç.

— ⊙ —

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 25-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн ларусем тумалли залĕнче хулари парти активĕ валли лекци пулать. Лекци теми:

«Совет Союзĕн вăрçăри тата тĕнчери лару-тăрăвĕ».

Лекцие ЦК ВКП(б) пропгруппин членĕ **КОЧНЕВ** юлташ вулать.

Билетсене ВКП(б) Горкомĕнче, 124-мĕш номерлĕ пÿлĕмре илмелле.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив Парикмахерского хозяйства ГКО с прискорбием извещает родных и знакомых о преждевременной смерти после тяжелой болезни члена коллектива

Шупневой Марфы Хрисанфовны

и выражает соболезнование мужу покойной. Комиссия.

Чебоксарский вечерний текстильный техникум

без отрыва от производства объявляет набор студентов по специальностям: 1) хлопкопрядение и 2) хлопкоткачество.

В техникум принимаются граждане от 15 лет и выше, имеющие образование в объеме 7 классов средней школы.

К заявлению о зачислении в техникум прилагаются: свидетельство об образовании, свидетельство о рождении или паспорт (предъявляется лично), справка о состоянии здоровья и справка с места работы.

Прием заявлений и справки по вопросам приема производятся по адресу: ул: Ленина,, дом 61, учебная часть техникума, ежедневно с 10 до 21 ч.

ДИРЕКЦИЯ ТЕХНИКУМА.

Чувашпромстрахкассе на постоянную работу требуются: инспектор охраны труда и техники безопасности, старший оргинспектор, бухгалтера-ревизоры.

С предложением обращаться по адресу: г. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21 и в часы занятий по телефону 6—79 два звонка. Одиноким предоставляется квартира.

Требуются: инспектор по охране труда, ст. бухгалтер и счетовод-кассир. Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. М.-Горького, 32, Коопинстрахкасса.

Требуется главный бухгалтер, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, инженер по запасным частям к сельхозмашинам и статистик.

Обращаться: ул. Калинина, № 34. Телефон 0—94.

Чувашская контора «Селхозснабжение».

6-го декабря с. г. пропала лошадь, принадлежащая Карачуринскому лесничеству. Приметы: мерин рыжей масти, грива направо, рост средний, в полной упряжи в дровни с курманом. При нахождении просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Чувашский Опытный Лесхоз. Тел. № 7—16.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1148 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.